Ача амăшĕсем валли

# Тепĕр хут ача амăшĕн капиталĕ пирки

***2007 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса «Ачаллă çемьесене патшалăхăн хушма пулăшăвне парасси çинчен» 2006 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнче йышăннă 256-ФЗ № Федераллă саккун вăя кĕчĕ. Ку Федераллă саккунпа ача амăшĕн (çемье) капиталĕн виçине 250 пин тенкĕ палăртнă. Инфляци шайне кура ку виçене çулсерен çĕнĕрен пăхса тухĕç. Амăшĕсене ку укçана аларан памаççĕ, унпа тĕллевлĕ усă курма пулать.***

***Ача амăшĕн капиталĕпе усă курмалли правăна регистрацилеме саккунпа патшалăхăн хушма пулăшăвĕпе усă курма тивĕçлисен регистрне туса хума пăхнă. Ку регистра РФ Пенси фончĕпе унăн территори органĕсем туса пыраççĕ. Паян пирĕн ыйтусем çине РФ Пенси фончĕн районти уйрăмĕн ача амăшĕн (çемье) капиталне илме патшалăх сертификатне парассипе ĕçлекен специалист Светлана Анатольевна РОМАНОВА хуравлама кăмăл турĕ.***

**– Патшалăхăн хушма пулăшăвĕпе камсем усă курма пултараççĕ-ха?**

– Ача амăшĕн капиталĕпе усă курас право ача çуралсан е ăна усрава илсен, енчен те ачан РФ гражданлăхĕ пур пулсан, вăя кĕрет. Çак правăпа Раççей Федерацийĕн гражданĕсем усă кураççĕ. Вăл шутра чикĕлеш енче пурăнаççĕ пулсан та. Чи малтанах патшалăхăн хушма пулăшăвне 2007 çулхи январĕн 1-мĕшĕ хыççăн иккĕмĕш ача çуратакан е усрава илекен амăшĕсем тивĕçеççĕ. Кунпа пĕрлех 2007 çулхи январĕн 1-мĕшĕ хыççăн виççĕмĕш е ытти ачасем çуратакансем, енчен те вĕсем унччен патшалăхăн ку хушма пулăшăвĕпе усă курман пулсан.

**– Ача амăшĕсене кăна тивĕçет-и ку пулăшу?**

– Енчен те арçын иккĕмĕш, виççĕмĕш е ытти ачасене усрава илекен пĕччен пурăнакан çын шутланать тата унччен ку правăпа усă курман пулсан, ача амăшĕн (çемье) капиталне ăна шутласа параççĕ. Кунпа пĕрлех ача усрава илни пирки суд йышăнăвĕ 2007 çулхи январĕн 1-мĕшĕ хыççăн вăя кĕни кирлĕ. Ачасен амăшĕ вилнĕ, ăна ача амăшĕн прависенчен хăтарнă, вăл хăй ачисен сывлăхĕпе пурнăçне хирĕçле ĕç тунă пулсан, ача амăшĕн капиталĕпе усă курассин правине ачасен ашшĕне параççĕ. Кунта ачасен ашшĕ РФ гражданинĕ пулмалла тесе палăртман.

**– Ача амăшĕн капиталне виççĕмĕш, тăваттăмĕш ача çуратакансем те тивĕçеççĕ вĕт-ха?**

– Çапла. Патшалăхăн хушма пулăшăвне кирек хăш ача çуратсан е усрава илсен те илме пулать. Анчах та пĕрремĕш ачашăн кăна памаççĕ. Кунсăр пуçне тата пулăшупа пĕр хутран ытла усă курма май çук.

Ача çуратнă амăшĕн е ача ашшĕн кăна мар, иккĕмĕш, виççĕмĕш, тăваттăмĕш ачана усрава илекенсен те ача амăшĕн капиталĕпе пĕр хут усă курма право пур.

**– Пурнăçра тĕрлĕрен инкек-синкексĕр пулмасть. Ача амăшĕн капиталĕпе усă курма тивĕçлĕ ашшĕпе амăшĕ иккĕшĕ те çĕре кĕнĕ пулсан патшалăхăн хушма пулăшăвĕпе камсем усă кураççĕ-ха?**

– Саккунра кун пирки те ăнлантарса пани пур. Енчен те ачасен ашшĕ-амăшĕ вилнĕ, вĕсем хăйсен ачисем тĕлĕшпе сывлăхшăн сиенлĕ преступлени тунă пулсан, вĕсене ача ашшĕ-амăшĕн прависенчен хăтарнă пулсан, ачасене усрава илнине суд йышăнăвĕ пăрахăçланă пулсан, ача амăшĕн капиталне çемьери çул çитмен ачана (çемьери кашни ачана пĕр виçепе), çул çитнĕ ачана (çемьери кашни ачана пĕр виçепе) вĕрентӳ учрежденийĕнче кăнтăрлахи уйрăмра вĕренет пулсан 23 çулччен параççĕ.

**– Ача амăшĕн капиталне илме тивĕçлине ĕнентерекен документ мĕн пулса тăрать-ши?**

– Çавна валли пурăнакан вырăнти РФ Пенси фончĕн территори органĕсенче ятарлă патшалăх сертификачĕ параççĕ. Пенси фончĕ ача амăшĕн капиталне илме тăратнă документсен чăнлăхне тĕрĕслеме пултарать. Ача 3 çул тултарсан вара çак сертификат ача амăшĕн капиталĕпе усă курма май парать.

Хальлĕхе сертификат илме 11 амăшĕ заявлени çырнă. Мартăн 23-мĕшĕнче 2 амăшне сертификат паратпăр.

**– Калăпăр, çемьере иккĕмĕш е виççĕмĕш ача çуралчĕ. Ача амăшĕн капиталне илес текенĕн малалла мĕн тумалла-ха?**

– Ача çуралнине уявланă хыççăн çемьен çĕнĕ членне ЗАГС пайĕнче регистрацилесен тата ачан Раççей гражданлăхне çирĕплетсен хĕрарăмăн вырăнти пенси фондне пымалла. Кунта вăл ятарлă формăпа патшалăх сертификатне илме заявлени çырать. Заявленипе пĕрле çак документсем кирлĕ пулаççĕ:

– çын кам пулнине ĕнентерекен, ăçта пурăннине çирĕплетекен документ;

– ача Раççей гражданинĕ пулнине çирĕплетекен документ;

– çемьере кашни ача çуралнине (усрава илнине) ĕнентерекен документсем.

**– Патшалăхăн хушма пулăшăвĕпе усă курас текенсен çийĕнчех заявлени пама пымалла-и?**

– Васкама кирлĕ мар. Ача амăшĕн капиталне илессипе документсене кирек хăш вăхăтра та тăратма пулать. Унпа вара çуратнă е усрава илнĕ ача 3 çул тултарнă хыççăн кăна усă курма май пулĕ.

**– 250 пин тенкĕпе мĕнле тĕллевпе усă курма май пур-ха?**

– Ача амăшĕн капиталне илме тивĕçлĕ çын патшалăхăн хушма пулăшăвĕпе хăй пĕлнĕ пек усă курма пултарать. Кунта укçа-тенкĕпе усă курассин виçĕ енне палăртнă. Кусем вĕсем, пĕрремĕшĕнчен, çурт-йĕр тăвасси тата пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатасси; иккĕмĕшĕнчен, Раççей Федерацийĕн территорийĕнче ача вĕрентӳ учрежденийĕнче вĕреннĕшĕн тӳлесси тата, виççĕмĕшĕнчен, ача çуратакан хĕрарăмăн ĕç пенсийĕн хушăнакан пайне çирĕплетесси.

**– Укçапа пĕр тĕллевпе кăна усă курма май пур-ши?**

– Палăртрăмăр ĕнтĕ, ача амăшĕн капиталĕпе усă куракан çын ку суммăна тĕрлĕ енпе тăкаклама пултарать. Кунпа пĕрлех çавна та каласа хăвармалла. Ку суммăна вăл пĕтĕмпех пĕр тĕллевпе е пайăн-пайăн тĕрлĕ тĕллевпе усă курма пултарать. Анчах та ача 3 çул тултарни кирлĕ.

Ку укçана вара ытти тĕллевпе усă курма юрамасть.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

Ыйту-хурав

# «Хыçалти парта» – çамрăксен хаçачĕ

***Эпир, Çатракасси шкул ачисем, “Хыçалти парта” хаçат пирки илтнĕччĕ. Унта мĕнле темăсене ытларах çутатаççĕ-ши тата пирĕн çырусем валли вырăн тупăнĕ-ши?***

**Хĕрсен ушкăнĕ.**

**Ку ыйту пирки А.Г. Николаев ячĕллĕ Калайкасси вăтам шкулĕпе çыхăнтăмăр. Хаçатпа тĕплĕнрех паллаштарма вара хаçат проекчĕн авторĕ, чăваш чĕлхипе сăмахлăхне вĕрентекенĕ, шкул директорĕн çумĕ Александр Марсович Степанов кăмăл турĕ:**

– Чӳк уйăхĕнче “Хыçалти парта” хаçатăн пĕрремĕш номерĕ кун çути курчĕ. Корреспондентсем вара шкул ачисемех. 12 страницăпа тухса тăракан хаçат пуриншĕн те интереслĕ пултăр тесе нумай тăрăшатпăр. Хаçата алла илсен тĕрлĕ рубрикăсене асăрхама пулать. Акă, “Шкул пурнăçĕ”, “Саламсем”, “Вăхăт тата эпир”, “Çамрăксен утравĕ”, “Пирĕн пултарулăх” тата ытти рубрикăсем хаçата тулли, пуян содержаниллĕ кăларма май параççĕ. Чи пĕлтерĕшли вара – эпир кашни çыру çине тимлĕх уйăрни. Пирĕн пата ытти шкулсенче вĕренекенсем те чылаййăн çыраççĕ. Çакă пĕрпĕрин опычĕпе паллашма, тус-юлташ тупма май парать. Эпир шкулта вĕреннĕ çулсенче “Хатĕр пул” журнал тухса тăратчĕ. Вăл питĕ интереслĕччĕ те çавăнпа та ăна тăтăшах шкулта туссемпе сӳтсе яваттăмăрччĕ. Эпир вара хамăр хаçат çав журнала улăштарма пултартăр тесе тăрăшатпăр, мĕншĕн тесен “Хатĕр пул” тахçанах çук ĕнтĕ. “Тантăш” хаçата илес пулсан вăл кăшт аслăраххисем валли пек туйăнать.

Пирĕн çинчен “МК – Чебоксарах”, “Советская Чувашия”, “Çĕнтерӳ ялавĕ” хаçатсенче тата чăваш телевиденийĕнче асăрхарĕç. Çакă вара пирĕн пата çыракансен йышне татах та нумайлатма май пачĕ.

Хамăрăн çитĕнӳсем çинче те чарăнса тăрас килет. Хаçат тин çеç кун çути курма пуçларĕ пулин те, ун çинчен АПШра, Сербире, Костромара, Калининградра тата ытти çĕрте те илтме ĕлкĕрчĕç. Ку вара пысăклатса каланă сăмах мар. Тĕрлĕ конкурссене тăтăшах хутшăнатпăр, пĕрре мар çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçрĕмĕр. Интернетра хамăрăн уйрăм страница пур.

Хаçатăн пĕр номерĕ 4 тенкĕ тăрать. Кăмăл тăвакансем хаçата районти вĕрентӳ пайĕнчен тата пирĕн патран туянма пултарĕç.

Ыр кăмăллăх

# Пулăшу ытлашши пулмĕ

Ĕçре, çемьере пурте йĕркеллĕ пулсан пурнăç ăнса пырать, вăхăт иртни сисĕнмест. Анчах та пурнăçра вара кашнин шăпи тĕрлĕрен килет. Юлашки çулсенче ырă еннелле сахал мар улшăнусем пулчĕç пулин те, пулăшу кĕтекен çынсем те сахал мар районта.

Çакна ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн коллективĕ кулленхи ĕçре яланах асра тытать.

Хальхи вăхăтра районта пенсионерсем – 10758, нумай ачаллă çемьесем – 496, вĕсенче – 1605 ача çитĕнет.

Çут çанталăк хĕрарăм çине йывăр та пархатарлă тивĕç хунă. Унăн производствăра вăй хунипе пĕрлех çемьене, кил ăшшине тытса тăмалла, ăрăва малалла тăсмалла. Ачасем – пирĕн пуласлăх, теме хăнăхнă эпир. Мĕн пĕчĕкрен тĕрĕс воспитани парса, пултаруллă ывăл-хĕр çитĕнтерме сахал мар вăй-хăват, чун ăшши, чăтăмлăхпа çирĕп ăс-хакăл кирлĕ. Мĕншĕн тесен çакă пĕтĕмпех хамăрăн пуласлăхпа, ыранхи кунпа çыхăннă.

ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров ахальтен мар ĕнтĕ 2007 çула Ача çулталăкĕ тесе пĕлтерчĕ. Çавăнпа та çитĕнекен ăрăва тĕрĕс воспитани парса ĕçе юратма, йывăрлăхсене çĕнтерме вĕрентни, кирлĕ вăхăтра çак енĕпе пулăшу пани те уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Районта тулли мар çемьесенче ӳсекен ачасем сахал мар. Унсăр пуçне ачисене тĕрĕс воспитани паман, вĕсен пуласлăхĕшĕн тăрăшман ашшĕ-амăшĕсем те çук мар. Вĕсене те пулăшу кирлĕ, мĕншĕн тесен уншăн ачисем айăплă мар.

Пулăшу тенĕрен, вăл тĕрлĕрен пулма пултарать. Юлашки çулсенче ачаллă çемьесене пулăшасси çине патшалăх та пысăк тимлĕх уйăрать. Унсăр пуçне районта пурăнакан ырă кăмăллă çынсем те ку енĕпе аякра тăрса юласшăн мар. Районти социаллă хӳтлĕх пайĕ çулсеренех ыр кăмăллăх эрнисем ирттерет. Çак тапхăрта вуншар çын усă курма юрăхлă кĕпе-тумтир тата пурнăçра кирлĕ ытти япаласем парса йывăрлăхра пулăшма тăрăшаççĕ.

Кунта çакна асăнса хăварас килет: çынна ырă туни каялла ырăпах таврăнать. Ăна Библире каласа хăварнă. Ученăйсем çирĕплетнĕ тăрăх, ыттисене пулăшма тăрăшакан çыннăн ĕмĕрĕ вăрăмланать иккен. Каларăм ĕнтĕ, пулăшу тĕрлĕрен пулма пултарать тесе. Сăмахран, чирлĕ çынна врач патне илсе кайни, ватă пенсионер валли магазина кайса апат-çимĕç туянасси, чирлĕ тăвана пăхасси е тата йывăр хуйхă е инкек пулнă çынна кирлĕ вăхăтра ăшă сăмахсемпе хавхалантарма пĕлни, йывăрлăхсене çĕнтерме кирлĕ сĕнӳсем пани те çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ, вăхăтлă пулăшу.

Çакна та палăртсах калас килет. Хальхипе танлаштарсан, вăрçă хыççăнхи çулсенче ачасем нумай çуралнă. Вĕсен паян мăнуксем те пур ĕнтĕ. Вĕсем ачисене ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă хыççăн тăхăнма юрăхлă кĕпе-тумтир те сахал мар юлать. Вĕсене çав çи-пуç кирлĕ мар пулсан, ялти хăш-пĕр çемьесенчи ачасене вăл тем пекех пысăк пулăшу. Нумай çĕрте ĕç укçине те вăхăтра илейменççĕ, унăн виçи те пĕчĕк. Çавăнпа та кун пек çемьесене ачи-пăчине ӳстерме те çăмăл мар. Уйрăмах нумай ачаллă е тулли мар çемьесене кирлĕ çак пулăшу. Тем пек ăшшăн тав тăваççĕ вĕсем уншăн. Çыншăн çын тус, тăван, юлташ пултăрччĕ яланах. Çав пулăшăва районти социаллă хӳтлĕх пайĕнче ĕçлекенсем яланах хапăл туса йышăнĕç, кирлĕ çĕре çитерĕç, мĕншĕн тесен вĕсем ăçта, камсем мĕнле пурăннине лайăх пĕлсе тăраççĕ, май килнĕ таран пулăшма тăрăшаççĕ.

Юлашкинчен çакна каласа хăварас килет. Çынна вăхăтра тивĕçлĕ пулăшу пани никамшăн та ахаль иртмест. Ĕмĕр вăрăмланнипе пĕрлех сирĕн кăмăл çĕкленет, сывлăх лайăхланать, чĕре лайăхрах ĕçлеме пуçлать, чирлеслĕх чакать. Апла пулсан, май килнĕ таран пулăшма тăрăшар ыттисене, çын хуйхинчен аякра тăрса юлар мар.

**А. ЧЕРНОВА.**

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

# Кашнин ĕçĕ курăмлă

Чӳк уйăхĕн юлашки кунĕ Москакассинчи вăтам шкулта ăслăлăх конференцийĕпе асра юлчĕ. Ăна ăс-хакăл, кăмăл-сипет çулне халалласа ирттерчĕç. Конференцие хутшăнса хăйсене тĕрĕслесе пăхма кăмăл тунă 23 вĕренекен тĕпчев ĕçĕсене тăватă секцие пайланса хӳтĕлерĕç. Вĕсен ĕçне йĕркелесе ертсе пыракансем кашни вĕренекен хăйĕн пултарулăхне кăтартма, шухăшне ăнăçлă хӳтĕлесе хăварма пултартăр тесе хытă тăрăшнă. Çакă конференци пуçлансанах лайăх курăнчĕ. Вăл пĕрремĕш минутранах тума шутланă пек, пĕр такăнмасăр, пысăк хастарлăхпа, туслă лару-тăрура хĕрсе пычĕ.

Чи пысăк йышпа палăрни “Обществăпа гуманитари секцийĕ” пулчĕ. Малтанах кунта 10-мĕш класра вĕренекен О. Трихалкина Пĕтĕм Раççей шайĕнчи конференцие хутшăнма хатĕрленĕ “Этем прависем” ĕçĕпе паллаштарчĕ. Ăна вăл О.И. Тарасов вĕрентекен ертсе пынипе йĕркеленĕ. Ку секцире Л.Е. Карпова учитель кăтартса пынипе вырăс чĕлхинчи жаргонсене тĕпчесе чылай кăсăклă материал пухнă Е. Лебедева çĕнтерчĕ. Жюри çавăн пекех 11-мĕш класра вĕренекен А. Капустина, М. Максимова, М. Столяров, 9-мĕш класри И. Сибякова, В. Ильина ĕçĕсем питĕ ăнăçлă пулнине палăртрĕ.

“Тăваньен” секцире 11-мĕш класри Е. Захарова ĕçĕ пĕрремĕш вырăна тивĕçлĕ тесе йышăнчĕç. Вăл Е.М. Захарова вĕрентекен ертсе пынипе Каршлăхри Александр Невски мăнастир историне тĕпченĕ, хăйĕн ĕçне чылай сăн ӳкерчĕксемпе, архив документчĕсемпе çирĕплетнĕ.

М. Соколова тĕпчев ĕçĕнче хăйсен йăхĕн 7 сыпăкри тăванĕсемпе те паллаштарма пултарчĕ. Çак секцире иккĕмĕш вырăн çĕнсе илчĕ. Виççĕмĕш вырăн йышăннă С. Овчинников ĕçĕ те нумай çĕнĕлĕхпе паллаштарчĕ. Тĕпчев ĕçне вăл районти шкулсен историне халалланă. Çамрăк тĕпчевçĕ çирĕплетнĕ тăрăх районти шкулсем хăйсен пуçламăшне пĕлмеççĕ, юбилейĕсене тĕрĕс мар датăсемпе уявлаççĕ.

Ытти секцисенче те ĕçсем питĕ хĕрӳллĕ иртрĕç. Хутшăннисем нумай çĕнĕлĕх пĕлчĕç, хăйсен ĕçĕнчи хăшпĕр кăлтăксене те асăрхаса юлчĕç. Çакă вĕсене малашне те питĕ кирлĕ пулĕ. Конференцисем малалла та пулаççĕ-çке. Тепĕр тесен, хăйсен ĕçĕсене вĕсем конференци валли кăна та хатĕрленмен. Паян пĕлни, хăйсен тавракурăмне пуянлатни вĕсене пурнăçра, кирек хăш самантра та кирлĕ пулма пултарать.

Паллах, конференци ĕçне хастар хутшăннисене чысламасăр хăвармарĕç. Секцисенче пĕрремĕш вырăнсене çĕнсе илнисем районта иртекен конференцие хутшăнса палăрĕç. Анчах та паян чи савăнтараканни, хакли вăл – вĕренекенсем тĕпчев ĕçĕсене хăнăхса хăюлланса пыни, малтанхи утăмранах хастаррăн тытăнса хăйсен вăйне шанма вĕренни.

**Н. ГЕРМАНОВ.**

Пирĕн почта

# Хаçат-журналпа туслă

Библиотекăна тĕрлĕрен çын çӳрет: ватти те, вĕтти те. Пурте хальхи вăхăтра интереслĕ, кирлĕ информаци илме васкать.

Акă паян библиотекăна шăппăн кăна пĕр кинемей кĕрсе тăрсан, сывлăх сунса кĕтсе илтĕм. Тӳрех палласа та илеймерĕм. Пирĕн Москакасси ял тăрăхĕ пысăк, 16 ялтан çӳреççĕ библиотекăна. Кинемей библиотекăна çӳресшĕн, ăна Ахмане ял историйĕ кăсăклантарать иккен. Формуляр тултарнă май çынпа паллашса пыратăп: Архипова Велинидат Архиповна, Ахмане ялĕнчи фельдшерпа акушер пунктĕнче санитаркăра ĕçлет. Çак кунсенче Фелицата аппа (ялта çапла чĕнеççĕ) 80 çул тултарать.

– Хăвăр çинчен кăшт каласа парăр-ха,– тетĕп эпĕ тĕлĕнмелле çынпа паллашса.

– Мĕн каласа парам-ха ĕнтĕ, – тет вăл вăтанса. – Вăрçă вăхăтĕнче çитĕнсе хĕр пултăм. Арçынсемпе тан йăлăмра виçĕ çул йывăç касрăм, Иваново облаçне те ĕçлеме çӳренĕ, хĕр ача пуççăн конюхра ĕçлерĕм. 1950 çулта Ахманери фельдшер пунктне санитарка пулса ĕçлеме чĕнчĕç. Халĕ 57 çул унта вăй хуратăп. 1968 çултанпа Раиса Георгиевна Яндушкинапа килĕштерсе, пĕр-пĕрне ăнланса ĕçлетпĕр, çынсене кирлĕ, вăхăтлă пулăшу паратпăр.

Хăйĕн ача-пăча пулманран Фелицата аппа шăллĕн чирлĕ ачине усрава илсе ура çине тăратнă, çитĕнтернĕ, авлантарнă. Паянхи кун Ситуккасси ялĕнче ывăлĕпе, кинĕпе, мăнукĕпе пурăнать.

Велинидат тесе ăна ял пачăшки ят хунă иккен. Архиповсен килĕнче ача хыççăн ача вилнĕ пирки çĕр çинче çак хĕр пĕрчи пурăнтăр тенĕ пачăшкă.

– Паянхи кун великая дата – паянтан çак килте ача ан вилтĕр, – тенĕ.

“Ялав” журнала алла тытсан куçлăхсăрах вуларĕ кинемей. Библиотекăна халĕ тăтăшах килме шантарчĕ.

Тĕлĕнмелле çынсем пур пирĕн таврара.

**Р. СИБЯКОВА, Москакасси ял библиотекин библиотекарĕ.**